С. Лашман

33-102

# Ирхи акаран

(Оҫҫӗрк)

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абонем. ящ. № 25.

ҪАВАШСЕН ПАТШАЛӐХ ИСТАТТӖЛСТВИ
Шупашкар 1933

# ТӲРЛЕТНИСЕМ-

| Стр. | Йӗрке | | Ҫапӑннӑ: | Вуламалла: |
|---|---|---|---|---|
| 5 | айалт. | 5 | ҫекреттарӗ те | ҫекреттарӗ ге, |
| 7 | „ | 13 | сатанние | сатанине |
| 7 | ҫӳлт. | 5 | пулсан. | пулсан, |
| 7 | „ | 5 | Пуҫлӑпӑр. | Пуҫлӑпаr, |
| 8 | „ | 4 | теев | тесе |
| 8 | „ | 9 | тухаҫӗӗ. | тухаҫҫӗ. |
| 9 | „ | 7 | Иванӑҕ. | Иванӑҕ, |
| 9 | „ | 10 | ҫуракинҕен | ҫуракиҕҕен |
| 9 | „ | 13 | ӗслет. | ӗҫлет. |
| 9 | айалт. | 9 | птук | плук |
| 11 | ҫӳлт. | 8 | Ларӑр-ха | Ларӑр-ха, |
| 12 | „ | 10 | ӗҫӗн | ӗҫӗ |
| 12 | „ | 13 | ҫамрӑкскер. | ҫамрӑкскер, |
| 12 | айалт. | 4 | пӗтерер | пӗгерӗр |
| 13 | ҫӳлт. | 12 | шутлатпӑр, | шутлатпӑр. |
| 14 | „ | 3 | ҫийеҫҫӗ. | ҫийеҫҫӗ, |

ЧУВАШСКАЯ ...НАЯ ПАЛА... ...ШСКО...

Чебоксары типография № 1 Чувашгиза

Упл. Чувашлита № 1347 Ст. ф. 72×105. Заказ № 442 Тираж 3000

# Ирхи акаран

...Йур кăҫал калама ҫук хăвăрт ирĕлсе пĕтрĕ. Ҫуркунне кăҫал пĕлтĕрхинӡен виҫ ерне малтан килӡĕ.

Мартăн 18-мĕшĕнӡе айлăмсенӡе шыв кӳленкелеме тытăнӡĕ. Сăрт ҫийĕсем хуралма пуҫларĕҫ. Ҫуна ҫулĕ пĕтрĕ. Апрелĕн 1-мĕшне йур тасалӡĕ те, 12 кун хушшинӡе ҫут-ҫанталăк улшăнса та тăӡĕ. Шурă тумне вăл симĕссипе улăштарӡĕ...

Колхоҫнĕксем иртен ир акана тухма хыпаланма пуҫларĕҫ. Колхос правленийĕсем, прикатирсем васкавлăн йулашки хатĕрленӳллĕ ĕҫсене тума тытăнӡĕҫ. Пуху хыҫҫăн пуху, лару хыҫҫăн лару.

— Кун пек ҫур ир килессе кам кĕтнĕ-ха? Епĕр хĕрсе Йăлăмра вăрман ĕҫленĕ. 500 кубометр таран вăрман леспромхос ваӡӡи касса турттарса паратпăр. Хамăр колхос ваӡӡи те 250 куп ытлашшипех хатĕрленĕ. Турттаратпăр хĕрсе. Ҫул пăсăлса килет. Йур пĕтсе

Чебоксар... Абонем... № 25.

пыраҫ. Ҫӗр купне кӑларма ӗлкӗртӗмӗр, 150 купӗ ҫаплах вӑрманта йулҫӗ. Суркунне перасе ҫитрӗ те, тет „Сталин“ колхосӑн 1-мӗш прикатӑн прикатирӗ Ҫтеппан Куҫнетсов калаҫура.

Вӑрман ӗҫленӗ пулсан та, ҫураки пуҫланиҫҫен ҫапах икӗ сӑнавлӑ туху туса иртертӗмӗр. Малтанхи тухӑва кирлӗ пек тухаймарӑмӑр та, апрелӗн 1-мӗшӗнҫе тепӗр тухура вара пирӗн пур прикатӑсем те хатӗрленсе тухрӗҫ, илсе хушса хураҫ 3-мӗш прикатӑн прикатирӗ Ҫмирнов Артеми.

— Хатӗрленмелли вӑхӑт кӗске пулсан та ҫуракине лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илтӗмӗр. Вӑрлӑхсене суртларӑмӑр. Лашасем тутӑ. Вӗсем ваҫҫи сӗлӗ те, утӑ та пур. Кӑҫал пирӗн пуҫламан утӑ капанӗсем те лараҫҫӗ-ха. Пӗлтӗр лаша апаҫӗ ҫӑварнине те ҫитеймерӗ.

Епӗр Шупашкар районӗнҫи Ишекри «Сталин» колхосӗнҫе.

Ку колхос тырпул тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн кӗрешнӗ ҫӗрте те ытти хуҫалӑхпа политтӗкла кампанисене тултарнӑ ҫӗрте те малта пыраҫ. Таврари йалсемшӗн «Сталин» колхосӗ пример пулса тӑраҫ.

Ӗлӗк патша вӑхӑтӗнҫе Ишекре тӗн ҫӗрӗ-

мĕн тĕп йăви пулнă пулсан (Микул турри) халĕ кунта ăçта кăна пăхан, çĕнни çĕкленнĕ. Кивви путланнă. Ђиркĕвĕ те хупăннă. Вăтам шкул. ПуЉнитса. Пуштă. Ратио. Çирĕп колхос. Ĕçе йертсе пыракан çирĕп, авторитетлă, клас кĕрешĕвĕнђе пиçнĕ парттийтсăсем. Колхоçнĕк утарнĕксем.

Вăхăт хĕрӳ. Куç хупма, çывăрма çук. Кашни самант хаклă. Колхос правленинђе те, прикатăсенђе те ĕç вĕрет. Плуксене йĕркелеççĕ, спруйа тĕрĕслеççĕ, лашасене пăхаççĕ.

Колхосăн план тăрăх, иртен те ир ака 45 кектар çинђе туса çитермелле. Пур прикатăсене те иртен те ир акассине сатанисем такçанах панă. Пур колхоçнĕксем те иртен те ир акассине пĕлеççĕ.

— Ну, мĕнле, Куçнетсов, хăçан акана? ыйтаççĕ хăйсен прикатирĕнђен колхоçнĕксем.

— Тухатпăр ĕнтĕ. Пурте хатĕр тăрăр.

Колхос претçетаттĕлĕ те, партйађейккă çекреттарĕ те йалсоветђĕ те иртен ир акана тухма васкатсах тăраççĕ. Ĕççене тĕрĕслесе пыраççĕ.

Пĕр «Сталин» колхосĕ çеç мар Ишек потрайонĕнђи ытти колхоссем иртен ир акана

ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
Абовем. ящ. № 25.

хăçан тухассине пĕлесшĕн. Сухаллă прикатирсем, çара йанахлă комсомолĕссем иртен ир акассин срукне пĕлес шутпа Ишекелле акроном патне утаççĕ. Луккин акроном райĕçтăвком упполномоҵăннăйĕпе пĕрле пыракан колхоçнĕксене хăçан акана тухмаллине ăнлантараççĕ.

— Мĕнле, çавăн пек ир аксан тырри пулаĭ-ши вара? Тъıрăсăр тăрса йулас марҵĕ, пуплеççĕ уйрăм хуçалăхлă ватăрах муҵисем.

— Сăнанă ĕç. Тыръ лайăх пулнăран акаççĕ те ăна, калаçусенҵе хирĕç тавăраççĕ колхоçнĕксем.

Пасарсенҵе, йалсовет канашлăвĕсенҵе калаçу çав иртен ир акасси çинҵен çеç.

— Сирĕн акана тухрĕç-и?

— Паҵ-паҵ аккалаççĕ.

— Пирĕн ыран тухаççĕ ĕнтĕ.

Апрелĕн 4-мĕш. Хĕвеллĕ тӳлек ир. Тӳпере кăнкăвак. Ăшă.

Пĕҵĕк канашлу. Кĕскен çеç ăçта сĕлĕ акмаллине шутлаççĕ. Колхос ампарĕнҵен суртлă сĕлĕ тийесе тухаççĕ. Акакансем акмалли кунтăсем илеççĕ. Шавлăн та хаваслăн уйхире иртен те ир акана тухса кайаççĕ. Уйхире кайакан прикатă шавлăн кайнине курса ҵӳ-

реҫесенҫен аҫасем, хĕрарӑмсем пӑхса йулаççĕ.

Уй. Кĕркунне сухаласа хӑварнӑ хурарах çĕр кӑпӑшланса тӑрат. Нӳрлĕ. Ана çине урапа пуссан путсах каймаст.

— Капла пулсан. акма лайӑх-ха. Пуçлӑпӑр. йулташсем...

Тӑватӑ акакан, малта Куçнетсов Александр иккĕмĕшĕ Йакковлев Миххаил, унтан Воротниккӑв Иван, йулашкинҫен Оççей Ваççилйĕв пĕрремĕш прикатӑри акакансем акма пуçлаççĕ. Ывӑçӑн ывӑçӑн тутӑ суртлӑ вӑрлӑха вĕсем ана çине сапаççĕ.

Виçĕ кектар сĕлĕ ҫасах акӑнат. 1-мĕш прикатӑ хӑй сатаниие тултарҫĕ те...

Апрелĕн 4, 5, 6-мĕш кунĕсенҫе, пур прикатӑсем те утарлӑ ĕçленипе «Сталин» колхосĕ 45 кектар акас вырӑнне 79 кектар акса хӑварат.

Апрелĕн 7, 8 тата 9-мĕш кунĕсенҫе колхос ирхи акана кĕрет. Колхосӑн хирĕçле планĕ тӑрӑх çак кунсенҫе прикатӑсем 20 кектар çерем çĕтсе йĕтĕнпе пахҫа вырӑнĕ хатĕрлемелле.

«Сталин» колхосӑн çеремĕ Ункӑ шывĕ хĕрипе. Ĕлĕк, пĕр 30 çул маларах, арман пĕви пур ҫухне кунта улӑх пулнӑ.

Кунта утă çулнă. Анҫах халĕ кунта пĕве таппи çĕре нӳрлетмен пирки курăк йапăх пулаŤ, çавăнпа та колхос правленийĕ çĕре усăсăр выртарас мар теее, ку çереме çĕтсе йĕтĕн акма, пахҫа-çимĕç тума вырăн тăвасшăн пулҫĕ.

Апрелĕн 8-мĕшĕнҫе ирех çак çереме çĕтме Ункă хĕррине 1-шпе 2-мĕш прикатăсем тухаçĕĕ.

Çерем айлăмри тип-тикĕс вырăнта. Кăшăртатса типсе кайнă пĕлтĕрхи курăк. Вырăнĕпе йĕпе кӳлленҫĕксем. Кăнтăр йенҫен тарăн çыран хушшинҫе пăтранҫăк шывлă Ункă йухса выртаŤ. Лерех, пĕр çухрăмра Хураçырма—«Сталин» колхосăн екkономийĕ. Çурçĕр йенҫе анкартисем, леререх колхосăн выҫăх витисем, таçтан курăнса тăракан çилос пашни, ту çинҫе Ишек, унăн авалхи микул ҫиркĕвĕ хăйĕн кирпĕҫрен тунă кӳлепипе йăтăнса лараŤ. Сала урамĕнҫи çуртсем, йăмрасем хĕвел çуттинҫе çуталса лараççĕ.

6 măшăр çăмарта пек çаврашка, самăр, лайăх пăхнă пĕҫĕк ăратлă лашасем плуксене ҫанкăртаттарса çитсе ҫарăнҫĕç çереме.

— Стой!

Прикатир Куçнетсов пĕҫĕк сар мăйăхлă, кăвак куçлă, тулккăçăр васкаман саттур етем, сухаламалли çереме пăхса çаврăнҫĕ те хăйĕн плукĕ патне тăрса колхоçнĕксене сухалама кăтартрĕ.

— Аĭа, пуçлас... Есĕ Воротниккăв малтан. Сан хыççăн Валентин Иванăҫ. вара Оççей Ваççилҫ...

— Пуçлас!

Воротниккăв Çеркей кăçалхи çуракинҫен Ишекри йалхуçалăх сăнавлă стантсинҫе 4 çул рапоҫҫире пурăннă. Кăçал вăл колхосра малтанласа ĕслет. Унăн хастарлăхĕ пысăк. Вăл тăрăшса ĕçлеме, утарнĕкле ĕçлеме кăмăл тунă.

Воротникков Çеркей васкамасăр кăна плука виççĕмĕш карҫĕ çине лартрĕ те, сулахай аллине тилкепине тытса, сылтăммипе птук аврине тытса, лашисене вырăнтан хускатрĕ.

— Но! Но!

Лашисем пĕтĕм кĕлеткипе туртăнса çереме çĕтме пуçларĕç.

Çерем курăклă. Тымарĕсем çирĕп. Анҫах лашасем тутă та аптрамаççĕ. Плук касси тăрăх тăмлăрах, нӳрпе çулланнă çерем ытканса çеç пыраĭ вĕт сылтăмалла!

ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА г. Чебоксары Чувашской АССР Абовем. экз. № 25.

Воротников хыççăн Валентин Иванъ кĕрет. Унтан Оççей Ваççилйĕв. Унтан ыттисем.

— Но! Но! йулса ан пыр! Таçта намăс курса тăрăпăр санпа...

— Ей, Хветĕр, Хватей! Шăйрăксем хăваратăр вĕт. Мĕншĕн пăхса пымастăр. Ав Гпăхăр-ха Валентин Иванъ мĕнле ĕçлет. Çавăн пек сухалама тăрăшăр, кăтартаť çамрăксене прикатир.

Валентин Иванъ, прикатир, примера хунă колхоçнĕк, 1-мĕш прикатăра паллă утарнĕк. Ун пек тимлĕ, тăрăшуллă ĕçлекен прикатăра нумайах мар-ха. Вăл, ĕçе вăхăтра, йулмасăр тухаť. Ĕç пахалăхĕшĕн тăрăшса. Акă халĕ те çерем çĕтнĕ çĕрте вăл пĕр шăйрăксăр сухалаť. Унăн плукĕ те тĕрĕс пыраť, лашисем те сулканмасăр туртаççĕ. Унăн плук çунаттисем çапçутă та, тап таса, пĕр татăк çĕр те çыпçăнмасť. Плук çунаттине вăл йатарласа тасатса тухнă.

Пĕр сехет сухаланă хыççăн лашасем тарлаççĕ. Лашасене кантарма, тата тапак туртма колхоçнĕксем ъарăнаççĕ.

— Кантарас лашасене!

— Кантăрас! Ман лашасем темле хытă тарларĕç-ха...

Сухаҫăсем ҫерем варрине тапак туртма пухăнаççĕ.

Валентин Иванђ ђĕлĕмне кăларса тапак тултарат̆.

Калпакне хыват̆ те пиншак ҫинђен ҫыхнă саппунĕпе тарне шăлат̆. Ђĕлĕмне тивертсе йарат̆.

Ларăр-ха ађсемĕр, епĕ сире „Канаш" вуласа парам.

Прикатă вулавҫи Ваççилйĕв, вăлах сухаҫă, кăсйинђен хаҫат кăларса ум статйине вулама пуҫлат̆.

— Шăп пулăр-ха пĕр хут... Вулама кансĕрлеттĕр вĕт...

Колхоҫнĕксем лăпланаççĕ. Вулавҫă вулат̆. Вуласа пĕтерсен, ăнлантару.

— Хаҫат каланă пек тусан, ђăнахах ҫав лайăх. Ил-ха акă мана, ĕҫре кайа йулнăшăн ман ĕҫкунĕ саплас пулсан пета вĕт вăл. Туртăнасах пулат̆. Пурин те ҫавă...

— Пурлăхлă ответлăх вăл шухăшлаттарĕ.

— Ку йĕркене пирĕн астăвас пулат̆...

— Ун пек туни тĕрĕс-ха вăл. Анђах епĕр ытла та канса кайман-и? Ат̆ăр-ха, йулташсем, пуҫлар сухалама...

— Лашасем сывлăш ҫавăрђĕҫ ĕнтĕ.

КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР
№ 25.

— Кантăр пуђ пăртак, халĕ туртма та йурат̆... Но! Но! шеремет! хăвалаççĕ лашасене сухаçăсем.

Кĕрхи хура шыв хумĕ пек çерем касси каллех хумханма пуçлат̆ плук айĕпе сылтăмалла.

Хветĕрпе Хватей такăна-такăна лашасем хыççăн çамрăк сасăсемпе йан йарса утаççĕ: пĕри хăвалат̆, тепри плукне тытса пырат̆.

Иккĕмĕш прикатăн та ĕçĕн хутшăнсах пырат̆. Вĕсем те тимлĕн сухалаççĕ.

Ĕçленĕ çĕре колхос претçетаттĕлĕ çулĕпе çамрăкскер. анђах хăйĕн ĕçĕсемпе пысăк оппăтлă, колхос строиттĕлстви кĕрешĕвĕнђе ниçнĕ парттийтсă,колхоса пуçласа, ăна йертсе пыракан Куçма Çмирнов пырат̆. Прикатира ђĕнсе илсе вăл ăна кăтартусем парат̆.

Унăн сăмахĕсем çирĕп. Вăл ĕç тăрăх татăклă калат̆. Унăн каланине тумасăр çук. Вăл пур ĕçе те лайăх, тĕпренех пĕлет. Унăн авториттеђĕ пысăк, ăна итлеççĕ.

— Пайан çак çереме пĕтерер те, ыран çав уйа кайса сухалăр.

— Унта çĕр типсе çитейменçке...

— Хăçан пулнă?

— Виçĕм кун...

— Пайан уш типнĕ.

Колхос претçетаттĕлĕпе правленийе кайатпăр. Çул çинђе вăл клуп лартасси çинђен, Ункă шывĕ çине арман, пĕрлех тинамă лартса колхоса електрификатси тăвасси çинђен калаť. Калаçу колхоçнĕксем пурнăçĕ çине, лаша апађĕ, инвентар çине куçаť. Утарнĕкле ĕçлекенсем çинђен калаçатпăр.

— Кăçал епĕр апатран аптраман. Колхоçнĕксем пирĕн тĕреклĕ пурнаççĕ. Тата тĕреклĕрех пурăнма шутлатпăр, Кăçал епĕр акă тыră тухăçлăхне хăпартасшăн тăрăшатпăр... Патшалăха та, хамăра та пулаť... Тĕреклĕ пурăнассин уссине пĕлсе çитнĕ ĕнтĕ епĕр, пирĕн тăрăшса ĕçлени çеç кирлĕ. Кăна колхоçнĕксем пĕлнĕ. Çавăнпа та пирĕн колхоçнĕксем тăрăшса, ăмăртса, пĕлсе ĕçлеççĕ. Акă пирĕн колхосра клуп пулаť, кашни киле акă малашне Иђйиђ çуттине кĕртĕпĕр. Халĕ акă 81 килте ратио итлеççĕ. Йăвăр вăхăтсем иртрĕç ĕнтĕ... Халĕ тĕрекленсех пыратпăр... Хамăра та, патшалăха та пурлăх, çăмăл пурнăç тăватпăр... Мĕншĕн пурăнас мар-ха çак тĕнђере ырă курса?..

12 сехет тӗлне сухаҫӑсем кӑнтӑрлахи апата таврӑнаҫҫӗ. Икӗ сехет лашисене кантараҫҫӗ, хӑйсем те апат ҫийеҫҫӗ. унтан каллех сухана. Ункӑ хӗрри каллех ӗҫ шавӗпе тулать, уйхирте каллех ӗҫ уйавӗ тытӑнать.

„Сталин“ колхос, 9-IV—1933 ҫ.

---

Послано в производство 17-IV—1933 г.
Подписано к печати 18-IV—1933 г.
Редактор М. Костин
Технический редактор А. Быков.
Ответственную корректуру держал Андреев Т.

Цена 10 коп.
Хакĕ 10 пус

Х—3

С. Лашман. С РАННЕГО СЕВА (очерк)

ЧУВАШГИЗ 1933 ЧЕБОКСАРЫ